Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать

16 (7977) № * Юн кун, 2012 ҫулхи нарӑс (февраль) уйӑхӗн 29-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

## Утас текен малаллах пӑхать

**Иртнӗ ҫулталӑк итогӗсене пӗтӗмлететпӗр**

Сисмерӗмӗр те – 2011 ҫул историе кӗрсе юлчӗ ӗнтӗ. Каялла ҫаврӑнса пӑхма, иртнӗ ҫул мӗнле ӗҫлени критикӑлла хак пама, малашлӑх тӗллевӗсене палӑртма вӑхӑт.

Районти ӗҫ ҫыннисем 2011 ҫула япӑх вӗҫлерӗҫ темелле мар. **Промышленность** продукцине туса кӑларассипе уйрӑмах кӑтартусем савӑнтарасҫӗ. Пӗтӗмпе вӗсене 1176 миллион тенкӗлӗх туса кӑларнӑ. Ку вӑл унчченхи ҫулхинчен 62,7 процент пысӑкрах. Ку кӑтарту, паллӑ ӗнтӗ, ытларах енчен «Сеспель» предприятипе Муркашри кирпӗч завочӗ мӗнле ӗҫлесе пынипе ҫыхӑннӑ. «Сеспель» предприяти пӗтӗмпе 1134,4 миллион тенкӗлӗх (169,1 процент) продукци, 651 единица (158 процент) ҫурма прицеп туса кӑларнӑ пулсан, ҫав вӑхӑтрах Муркашри кирпӗч завочӗ ӳсӗмлех ӗҫлеймен, 36,7 миллион тенкӗлӗх продукци хатӗрлесе кӑтартӑва 2010 ҫулхинчен 6,3 процент чакарнӑ.

«Моргауши–Хлеб» тата «Сундырь–Хлеб» предприятисем – ӳсӗмлӗ ӗҫлекеннисем шутӗнче. Муркашсем 27 миллион тенкӗлӗх (104,8 процент), Мӑн Сӗнтӗрсем 37,4 миллион тенкӗлӗх (108,6 процент) ҫӑкӑр-булка, кондитер, макарон тата ытти изделисем хатӗрленӗ. Муркашри сӗт завочӗпе «Моргаушкорм» предприяти вара хӑйсен кӑтартӑвӗсене 31,7 тата 9,6 процент чакарнӑ.

**Ял хуҫалӑх** продукцине пур йышши категорие кӗрекен хуҫалӑхсенче 1666 миллион тенкӗлӗх туса илнӗ. 2010 ҫулхипе танлаштарсан – 105 процент. Сутлӑх продукци 407,8 миллион тенкӗлӗх пулнӑ е унченхи ҫулхинчен 0,2 процент нумайрах сутнӑ.

Тӗш тырӑпа пӑрҫа йышши культурӑсене 34,4 пин тонна пухса кӗртнӗ, гектар пуҫне тивекен вӑтам тухӑҫ 23,7 центнерпа танлашнӑ. Ҫӗр улми тухӑҫӗ пӗр гектар пуҫне вӑтамран 147,5 центнер тивет, ӑна пӗтӗмпе 41,3 пин тонна кӑларса пухнӑ. Анчах та ял хуҫалӑх продукцийӗ туса илекенсене вӗсен хакӗсем чакса кайни «ура хурать».

Районӗнпе сӗт пӗтӗмпе 41,5 пин тонна е 98,1 процент туса илнӗ. Ял хуҫалӑх организацийӗсенче сӗт сӑвасси 6,9 процент чакнӑ, пӗтӗмпе 8,5 пин тоннӑпа танлашнӑ. Районӗпе кашни ӗне пуҫне вӑтамран 3959 килограмм сӗт сунӑ.

Мӑйракаллӑ шултра выльӑхсен шучӗ районӗпе пӗтӗмпе 16079 пуҫ пулнӑ (вӑл шутран ӗнесем 9798 пуҫ) е 2010 ҫулхипе танлаштарсан 99,3 процент. Сыснасен шучӗ те 2799 пуҫ чухлӗ (22,2 процент) чакнӑ, 9798 пуҫпа танлашнӑ.

Чӗрӗ виҫепе шутласан иртнӗ ҫулхи январь–декабрь уйӑхӗсенче 5533,1 тонна е 91,6 процент аш-какай туса илнӗ. Ку вӑл республикӑра туса илнин 5,5 процентӗ пулать. Ҫӑмарта 77 миллион штук (119,8 процент) илнӗ.

Ял хуҫалӑх продукцийӗ туса илекенсене патшалӑх пулӑшу панипе 2010 ҫулхи шӑрӑх ҫанталӑк хыҫҫӑн ама выльӑхсен йышне сыхласа хӑварма пултарнӑ. Иртнӗ ҫул районти агропромышленность комплексне патшалӑх енчен 106,7 миллион тенкӗ пулӑшу панӑ. Вӑл шутран федераллӑ бюджетран 67,4 миллион тенкӗ, республика бюджечӗнчен 39,3 миллион тенкӗ. Уйрӑм ҫынсен харпӑр хӑй хуҫалӑхӗсем 34,2 миллион тенкӗ патшалӑх пулӑшӑвне тивӗҫнӗ.

(Вӗҫӗ 3-мӗш стр.)

**Ӗҫлӗ визитпа**

## Мал туртӑмлисене патшалӑх та пулӑшӗ



Февралӗн 27-мӗшӗнче Шупашкара Раҫҫей Президенчӗ Дмитрий Медведев килнӗ, республика Пуҫлӑхӗпе Михаил Игнатьевпа тӗл пулса калаҫнӑ. Хӑйӗн ӗҫлӗ визитне Президент ҫӗр-шыври талантлӑ та мал туртӑмлӑ яш-кӗрӗм валли хӑйсен пултарулӑхне аталантарма майсем туса парассине, вӗсене ку тӗлӗшпе патшалӑх енчен тивӗҫлӗ пулӑшу парассине халалланӑ.

Малтанах Дмитрий Медведев «ЭКРА» предприятире **(сӑн ӳкерчӗкре)**, 2007 ҫулта уҫӑлнӑ 5-мӗш гимназире пулса курнӑ. Президент вӗсенче ҫамрӑксене тухӑҫлӑ ӗҫлеме, вӗренме, хӑйсен ӑс-хакӑлне, пултарулӑхне аталантарма мӗнле условисем туса панипе тата ытти ыйтусемпе интересленнӗ. Пултаруллӑ ачасемпе ҫамрӑксене тӗрев парасси Дмитрий Медведевпа Михаил Игнатьев тӗл пулӑвӗнче тӗп тема пулнӑ.

Хыҫҫӑн ҫӗр-шыв пуҫлӑхӗ Д.А. Медведев ертсе пынипе РФ Патшалӑх Канашӗн президиумӗн ларӑвӗ иртнӗ. Кунта та сӑмах ҫамрӑксем тӗлӗшпе тимлӗрех пулмалли, пулӑшу мелӗсемпе тата майӗсемпе анлӑрах усӑ курмалли пирки пынӑ.

Калаҫӑва пӗтӗмлетнӗ май Дмитрий Медведев талантсене пулӑшассин пӗлтерӗшӗ пысӑк пулни ҫинче тепӗр хут чарӑнса тӑнӑ. Ҫавна валли туса хатӗрленӗ концепцие тишкермешкӗн вӑхӑт пур. Анчах та вӑл малашнехи ӗҫ никӗсӗ пулса тӑрасси инҫе мар ӗнтӗ – ӑна ҫывӑх вӑхӑтрах йышӑнӗҫ, пурнӑҫлама тытӑнӗҫ.

**Хамӑр инф.**

## Вӗсенчен тӗслӗх илмелли пур

**Районӑн маттур ӗҫченӗсем**

***Суворов яч. хис. хуҫалӑхӑн Анаткассинчи сӗт ферминчи ӗнесене машинӑпа сӑвакан 7 оператор пӗлтӗр ушкӑнти кашни ӗнерен 5–6 пин килограмм сӗт сунӑ. Эсир сӑн ӳкерчӗкре (сулахайран сылтӑмалла) ҫак ӗҫченсен пӗр ушкӑнне куратӑр: Людмила Викентьевна ОЛГАШОВА (5183 кг), Надежда Валентиновна МИХАЙЛОВА (6003 кг), Надежда Евгеньевна ЖУРАВЛЕВА (6041 кг), Валентина Николаевна ПЕЧКОВА (6178 кг), Фаина Юрьевна АНТОНОВА (6041 кг), Татьяна Николаевна ФИЛИППОВА (5832 кг).***

***Хуҫалӑхра нумай ҫул ӗҫлекен Надежда Николаевна ОРЛОВА сӗт сӑваканӑн кӑтартӑвӗ те 5863 кг.***

**А. БЕЛОВ**
**сӑн ӳкерчӗкӗ.**



## Иртнине тишкерчӗҫ, тӗллевсене палӑртрӗҫ

**Район кунне халалласа**

***Район кунне халалласа пӗрле пухӑнса иртнӗ ҫул итогӗсене пӗтӗмлетесси, ӑмӑртура мала тухнисене, ҫӗнтерӳҫӗсене чыслясси, туса ҫитерейменнине критикӑлла хак парасси, малашлӑх тӗллевӗсене палӑртасси унченех йӑлана кӗнӗ ӗнтӗ. Иртнӗ эрне кун, февралӗн 24-мӗшӗнче те, район администрацийӗн ларусен залне ҫулленхи анлӑ пухӑва ӗҫ коллективӗсен представителӗсем, ентешлӗх членӗсем, предприятисен, организацисен тата учрежденисен ертӳҫисем, ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсем, ӗҫ ветеранӗсем, хӑнасем йышлӑ пухӑнчӗҫ.***

**МӖН ПУРНӐҪЛАНИ ЧИКӖ МАР**

Савӑнӑҫлӑ пухӑва район пуҫлӑхӗ – депутатсен районти Пухӑвӗн председателӗ И.В. Николаев уҫрӗ. Вӑл депутатсен районти Пухӑвӗн иртнӗ ҫулхи ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинче чарӑнса тӑчӗ. Отчетлӑ тапхӑрта пӗтӗмпе 11 лару иртернӗ, депутатсем 58 ыйтӑву тунӑ.

Пӗтӗмӗшле илсен район иртнӗ ҫулталӑка япӑх мар кӑтартусемпе вӗҫленӗ. Ҫакна район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Р.Н. Тимофеев хӑйӗн докладӗнче палӑртрӗ. Ӳсӗмсем промышленность продукцийӗ туса кӑларассипе те, ял хуҫалӑхӗнче те, ытти сферӑра та пур. Ҫав вӑхӑтрах вара усӑ курман резервсем пуррине те палӑртмасӑр хӑварма юрамасть. Хальлӗхе хӑйсен ӗҫӗсен шайӗпе районӑн вӑтам кӑтартӑвӗсенчен самай кайра пыракан предприятисемпе организацисем те ҫук мар. Апла пулсан мӗн туни чикӗ пулма пултараймасть. Иртнӗ ҫулхи ҫӗнсе илнӗ палӑрмӑлӑ чикӗсене сыхласа хӑварма, тухӑҫлӑрах ӗҫлеме, пурнӑҫ ыйтакан ҫӗнӗлӗхсемпе анлӑрах та тухӑҫлӑрах усӑ курса кӑтартусене татах ӳстерме, ҫынсен пурнӑҫ условийӗсене лайӑхлатса пыма майсем ҫук мар.

**ӲСӖМРЕ – КАШНИН ТӲПИ**

Район администрацийӗн пуҫлӑхӗн докладне сӳтсе явнӑ май хӑй тӗллӗн ҫӳрекен машинӑсен тата ытти йышши техникӑн техника шайӗн тӗрӗслевӗн Чӑваш Республикинчи инспекцийӗн пуҫлӑхӗ, республика тӗп патшалӑх инженер-инспекторӗ В.П. Димитриев малтанах ҫавна палӑртрӗ. Промышленность продукцийӗ туса кӑларасси палӑрмаллах ӳсни ытларах «Сеспель» предприяти ӑнӑҫлӑ ӗҫленипе ҫыхӑннӑ. Кӑтартусем республикӑн вӑтам кӑтартӑвӗнче те иртеҫҫӗ. Ытти предприятисен те туртӑнас пулать.

Иртнӗ ҫул ҫӗнӗ ял хуҫалӑх техники туянассипе район республикӑра 3-мӗш вырӑн йышӑннӑ. Ку япӑх кӑтарту мар. Техника хатӗрӗсемпе туллин тата тухӑҫлӑ усӑ курни кирлӗ. Хальлӗхе хуҫалӑхсенчи машинӑпа трактор паркӗсенче мӗн пур техникӑн 50 процентчӗпе кӑна усӑ кураҫҫӗ.

(Вӗҫӗ 3-мӗш стр.)

**В. Путин статйипе паллашатпӑр**

## Никама пӑхӑнманлӑх тӗп вырӑнта пулӗ

РФ премьер-министрӗн, РФ Президенчӗн кандидачӗн ҫичӗмӗш программа статйи тунти кун «Московские новости» хаҫатра пичетленсе тухрӗ. Ӑна тӗнче проблематикине халалланӑ.

Хӑйӗн «Раҫҫей тата улшӑнакан тӗнче» статйинче премьер Раҫҫей малашне те никама пӑхӑнман тулашри политикӑна тытса пырӗ тесе палӑртать. Федераци Канашӗн Пӗтӗм тӗнче комитечӗн пуҫлӑхӗн Михаил Маргеловӑн шухӑшӗпе ку вӑл Раҫҫей малашне те халӗ тытса пыракан тулашри политика курсне улӑштарас марри пирки ҫирӗплетсе калани. «Ытти ҫӗр-шывсен интересӗсене тивӗҫтернине мар, хамӑрӑн наци интересӗсене хӳтӗленине эпир ырламасӑр тӑма пултараймастпӑр», – палӑртнӑ сенатор.

Статьяра пирӗн ҫӗр-шывӑн тулашри политикин тӗп ҫулӗйӗрӗ пӗрлехи Европа анлӑшӗпе пӗрлешесси пулса тӑрать тесе палӑртнӑ. Анчах та кунта мӗне те пулин кура пайласси пулмалла мар, Раҫҫейӑн Европӑри цивилизациллӗ ҫулйӗре суйласа илме хӑйӗн ирӗк пур. Маргелов каланӑ тӑрӑх ку условисене пурнӑҫласси чи малтанах США тата НАТО мӗнле позици йышӑннипе, Раҫҫейпе Хӗвел Анӑҫ хушшинче тухса тӑракан хирӗҫ тӑрусене татса парас тӗлӗшпе компромиссем шырама хатӗр пулнипе ҫыхӑннӑ.

**«Новости» РИА.**

**Саламлатпӑр**

Хаклӑран та хаклӑ ҫыннӑмӑра, мӑшӑра, аттене, ывӑла, кӗрӗве, шӑллӑмӑра, пиччене – Мӑн Токшик ялӗнче пурӑнакан **Николай Михайлович ЕВСТАФЬЕВА** 50 ҫулхи юбилей ячӗпе чун-чӗререн саламлатпӑр. Мӑнаҫлӑ Атӑл шывӗн ҫулӗ евӗр вӑрӑм ӗмӗр, ҫӑл-куҫ пек тапса тӑракан вӑй-хал, ҫирӗп сывлӑх, тулли телей сунатпӑр. Умри ҫулу ҫутӑ та такӑр пултӑр.

Турӑ сана инкек-синкекрен сыхлатӑр. Ачусемпе, мӑшӑрупа, тӑвануусемпе савӑнса, килӗштерсе пурӑнмалла пултӑр. Сӗтелӳ ҫӑкӑр-тӑвартан, кил-ҫурту тӑван-пӗтентен ан татӑлтӑр.

**Саламппа мӑшӑрӗ, хӗрӗпе кӗрӗвӗ, ывӑлӗ, амӑшӗпе хуньамӑшӗ тата ҫывӑх тӑванӗсем.**



Чи хаклӑ ҫыннӑмӑра, юратнӑ аннене, хунямана, кукамая, асаннене – Москакасси ялӗнче пурӑнакан **Елена Александровна ПУШКИНАНА** 80 ҫулхи юбилей ячӗпе чӗререн саламлатпӑр. Пире савӑнтарса пурӑнма Турри сана пулӑшса пытӑр, эсир пурришӗн савӑнатпӑр, вӑрӑм кун-ҫул сунатпӑр.

**Саламппа: ывӑлӗсем, кинӗсем, мӑнукӗсем, кӗҫӗн мӑнукӗсем, тӑван-хурӑнташӗсем, пускилсем.**

